**Ӳкерӳ ăсти**

Курни — сахал. Курнин пĕлтерĕшне,
хам туйнă пек, епле эп кăтартайăп?
Мĕнле йĕрсем эп кун валли тупайăп,
ăçтан илейĕп эпĕ вĕсене?

Эп тăвайман ӳкерчĕк — ман ăсра:
вăл сталактит пек ялтраса илет те,
курнать — Скопас вакханки пек... Чĕтрет те
сасартăк çухалать шухăшăмра.

Хĕрарăм пӳ-сине-и сĕмленсе
арçын пӳ-сийĕпе танлаштаратăп, —
пĕр пекскерсен уйрăмлăхне куратăп:
драмăпала трагеди пек вĕсем.

Асра эп самолетăн çунатне
куратăп: сивĕ çумăрăн тумламĕ
ялтрать пек ун çинче... Ун пек тăвам-и
ялти витре çинчи тумламсене!

Пăрланнă юр ӳкет хырсем çинчен, —
кĕрт ăшĕнчи йĕрри-суранĕ чĕрĕ! —
Ĕлккен курка, хуратнă кĕмĕл тĕрĕ
ялтрать пек — пĕр амантнă кĕртсенче.

Эй, тертĕм: сăнарласчĕ — сăнара!
Саккун пек ку — ăса сăнар кĕрсессĕн.
Тен, йыт йăли пек... — Вăл çыврас килсессĕн

çапла çаврăнкалать йăви тавра...

1958

*Айхи, Г. Ӳкерӳ ăсти : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 96.*